С С(ЧУВ)
Л63
85378-ЧУВ

Ева Лисина

Çăкăр чĕлли

* * *

Анне мана çуллахи пĕр ирхине кăвак çутăллах вăратрĕ те çапла каларĕ:

— Инвалидсене кăçал хăмăл айне çултараççĕ, тет. Пирĕн Лисукăн ялан пуçĕ çаврăнать. Райун пульницине çавăтса кай-ха ăна, тухтăрсене кăтарт. Тен, Лисука инвалид тăвĕç, вара эпир хăмăл çулăпăр, улăмлă пулăпăр. Ĕнесĕр пĕтетпĕр эпир.

Эпĕ пуçа чикетĕп. Ак, анне: «Эс каймасан, кам кайĕ-ха ĕнтĕ?»— тейĕ. Чăн, мансăр пуçне кам кайĕ? Аттем, пиччем çук. Аннен колхоз хирĕнче чĕкĕнтĕр çумламалла. Каçалăкне лăчах вир курăкĕ пуснăччĕ, паян та кăкласа пĕтереймĕ. Манран икĕ çул аслăрах аппа, Лисук, чирлекелесех тăрать. Унччен вăл чиперехчĕ, кăçал темĕскер пулчĕ ăна, пурне те пăтраштарать, вăхăт-вăхăт нимĕн те ăнланмасть. Халь ĕнтĕ ăна «Ухмах Лисук» теме пуçларĕç.

— Лисука инвалид тусан, укçа та парĕç. Ун чухне сана çĕнĕ кĕпе çĕлесе парăп,— тархаслать, илĕртет анне.— Эс каймасан, кам кайтăр-ха ĕнтĕ?

Ман çĕнĕ кĕпе çĕлесе парасса питĕ ĕненес килет. Анчах та ку — суя сăмах çеç: пирĕн килте укçана туртса тăракан шăтăк ахаль те нумай.

Чуна хурлăх пусса пырать. «Ах, турă!— шухăшлатăп эпĕ.— Райунĕ ăçтарах-ши? Хăш çулпа каймалла-ши? Каç пуличчен çаврăнса килейĕпĕр-ши?»

Анне сасси çирĕпленет, вăл савăнăçлă хыпар пĕлтернĕн хавхаланать.

— Сана укçа парса ярăп. Райунта столовăй пур, пульницара ĕç пĕтерсен, çавăнта кĕр. Унта час-часах çăкăр сутаççĕ. Çăкăрне хăйне уйрăм сутмасан, яшка ил, яшкапа пĕрле çăкăр параççех.

Çăкăр? Инçе çул тек шиклентермест мана. Анне сăмахĕсем ман чунăн чи ачаш кĕтесне сĕртĕнчĕç. Тырă вырнă вăхăтра колхозра çăкăр паркалатчĕç-ха; эпĕ çăкăр çисе курнă. Анчах, шăпах вăрçă тапраннă çул çуралнăскер, тăххăра çитсе те хамăр килте çăкăр пĕçернине астумастăп. Çăкăршăн эпĕ таçта та çитме хатĕр.

— Райун инçе-и вăл?— ыйтатăп аннерен.

— Кунтан ултă çухрăмра. Сухăр кассипе хамăр ялтан тухатăн та Тăрмăша кĕретĕн. Тăрмăш арманĕ таçтанах курăнать, çавăнталла каякан çулпа ут та ут, райунах çитсе кĕретĕн. Пульница — вăрăм шурă çурт.

Анне, эпĕ килĕшнипе савăнса ўкнĕскер, сасартăк шăпланать, ман çине «ярас-ши ку ачана, ярас мар-ши» тенĕ пек иккĕленсе пăхса тăрать. Унтан ыталаса илет, пуçран шăлать. Анне ыталать мана, çавах хама тăлăх ача пек туятăп — мĕнле кайса килмелле-ха?.. Пĕлмен-курман çĕре тухма йывăр, вырăнтан тапраннă куççуль пуçа хĕсет.

Лисукпа иксĕмĕр çул çине пĕрер курка сĕт ĕçетпĕр. Эпĕ çĕтĕк татăкĕпе чĕркенĕ укçана хыпашласа пăхатăп та, Лисука çавăтса, урама тухатăп.

— Ухмах Лисук! Ухмах Лисук!— кăшкăраççĕ ачасем.

Ахаль пулсан хăвалаттăм-ха вĕсене, халь вара васкамалла, çавăнпа нимĕн те чĕнмеетĕп. Лисук шăпах пуçĕ ыратнипе асапланать, çакăн пек кунсенче вăл сассăр, мĕн хушнине итлет,— халь ман хыçран чирлĕ путек пек лĕпĕстетсе пырать.

— Ухмах Лисук! Ухмах Лисук!

Пĕрех хут часрах хамăр ялтан тухса каясчĕ. Эпир васкатпăр.

Сухăр кассипе ун вĕçĕнчи хир пирĕншĕн хăрушă мар, ку таврара темиçе хутчен те выльăх шыраса курнă.

Тăрмăш йăмрисем пирĕн ялтисенчен çўллĕрех пек, вĕсем: «Эсир кунта мĕн туса çўретĕр?»— тесе ыйтнăн туйăнать. Эпĕ Лисука йăмрасенчен аяккарах, çул варрине,

туртатăп. Çулĕ те пирĕнни пек мар, кăпка тусанлă пулин те урана тăрăнтарать. Пире патак утланнă ача хăвалать. Унран тарса, алăкне уçса пăрахнă çул хĕрринчи пӳрте кĕрсе тăратпăр. Лавкка иккен. Те килтен выçă тухнипе, эпĕ пĕртен-пĕр тавара çеç, пысăк ещĕкри салма пысăкăш канихвете, асăрхатăп. Лисук та çавна куç хывнă, вăл мана çанăран туртать:

— Еля, канихвет илсе пар-ха!

Хыпаланса çĕтĕк татăкне салтатăп. Пӳрнесем йĕпе, вĕри, сывлама йывăр, — укçана каялла çыхса хуратăп. Эпĕ çăкăр илесшĕн. Лисук канихветсĕр тухасшăн мар, вăл шăлне çыртса ман алăри çыхха тăпăлтарать. Эпĕ ăна чыша-чыша яратăп. Вăл çавах сĕкĕнет. Лавккаçă пирĕн çине тĕлĕнсе пăхса тăрать. Мĕнпур вăя пухса аппана урама сĕтĕрсе тухатăп...

Эпĕ сывлăш пӳлĕннĕрен чарăнса тăратăп. Чупатпăр иккен. Ик айккипе тикĕс хир. Çул хĕрринче арман ларать. Ун кĕрĕс-мерĕс мĕлки ыраш пусси çинче тапаланать. Хир варринче пĕр йывăç ӳсет. Çак ют çĕрте вăл çеç, пĕчченскер, хӳтĕлекен тăван пек туйăнать. Эпир майĕпен лăпланатпăр.

Хĕвел вĕрекен шыв тăкăннă евĕр çунтарать. Пит-куçа тар çиет. Çулçăсем лапсăр кайнă. Тусан çине тăсăлса ӳкнĕ чăкăт курăкĕнчен урана вĕри çапать.

Эпир çул хĕрринчи шурлăх умĕнче чарăнатпăр. Пĕчĕк шыва усал курăкĕ сăрса илнĕ. Çулçисем унăн тачка, тымарĕ мăнтăр. Сулхăн çулçăсене сире-сире, шыв ывăçласа илетпĕр, çăвăнатпăр. Пирĕн ĕреххетленсе ларма вăхăт çук, малаллах утас пулать. Вĕри сывлăш вĕлтĕртетет. Пур япала та иккĕллĕ курăнать. Йывăррăн хашăлтатакан Лисук вунă-вуник утăмранах ларса канасшăн йăлăнать. Ларсан— тăма хĕн, пуç çаврăнать,— çакна ăнланмасть вăл.

Пĕтĕмпех анкă-минкĕленсе çитнĕскерсем, эпир кăнтăрла тĕлĕнче пысăк ял урамне пырса кĕретпĕр. Ку урампа пĕрне-пĕри палламан халăх утать пулас, хирĕç пулакансене сывлăх та сунмаççĕ. Эпир çавăтăнатпăр. Хăш вырăна çитнине ыйтса пĕлесчĕ — хăяймастăп. Сасартăк аппапа

иксӗмӗр те хавассӑн кӑшкӑрса яратпӑр: пире тир, çӗтӗк тиенӗ лав хӑваласа çитет. Ку — пӗлӗш лавçӑ, вӑл пирӗн ялта та çӗтӗк-çурӑк пуçтараканччӗ. Лавçӑ лашине чарать те, эпир каптӑртатакан ула-чӑла тир çине, çӗтӗк миххисен хушшине хӑпарса ларатпӑр.

— Хӑш ялтан-ха эсир?— ыйтать тир пуçтаракан.

— Эпир — Çӗньялтан.

— Кам ачисем?

— Эпир Хӗветура ачисем.

Вӑл пирӗн аннене те пӗлет иккен. Çакӑ мана хӑюлантарать, эпӗ столовӑй ӑçтине, вӑл хӑçан уçассине тӗпчетӗп. Пиччe хуравӗ хавасла: столовӑй кашни кунах ӗçлет-мӗн.

— Çӑкӑрне вара хӑйсемех пӗçереççӗ-и?

— Ав, столовӑй хыçӗнче пӗчӗк пӳрт ларать. Çавӑнта пӗçереççӗ.

Шӑрӑх кунта мӑрьерен тӗтӗм кӑларакан пӳрт чӗрене кисрентерет, вӑл юмахри асап курса пӗтнӗ паттӑрсем çитсе тухнӑ илемлӗ çӗршыв пек туйӑнать. Вите шӑрши кӗрекен пирӗн лав çине пылла чечек шӑрши пырса çапӑнать. «Çӑкӑр шӑрши пуль...»— сӗмленетӗп эпӗ.

Эпир столовӑй умӗнче анса юлатпӑр. Эпӗ унта кӗрсе пӑхасшӑнччӗ, анчах та урасенче тӗрек пӗтсе ларчӗ, вара пысӑк ӗçе пуçӑниччен ӑпӑр-тапӑра пӗтерес шутпа Лисука çавӑтатӑп та, анраса кайнӑскер, шурӑ çурт енне танкӑлтататӑп.

Больница тавра решетке тытса çавӑрнӑ. Курӑк пуснӑ картара кӑвак тум тӑхӑннӑ çынсем лараççӗ. Тулли хӗрарӑм йывӑçсем хушшинчи кашта çине шурӑ кӗпе-йӗм çакать.

Лисукпа иксӗмӗр алӑран алла тытӑнса больницӑна кӗрсе каятпӑр.

Шалта — вӑрӑм коридор. Икӗ енӗпе алӑк. Пӗр алӑкӗ умне уксах-чӑлах пуçтарӑннӑ. Сак çине вырнаçайманнисем стена çумне тӗршӗннӗ, урайне ларнӑ.

— Инвалидсене ӑçта пӑхаççӗ?— ыйтатӑп эпӗ çӳллӗ пиччерен.

Вӑл темӗн каласшӑн, пуçӗ ун вӗттӗн-вӗттӗн чӗтренме

тытăнать. Ман çан-çурăм сӳ-ӳ тăвать, эпĕ каялла чакатăп. Пиччe, мана хăратнине курса, хăй те пăлханса каять, хăйăлтатакан сассине путарасшăн хăрах аллипе çăварне хуплать, теприпне умри алăк çине тăсса кăтартать.

Пиччерен пăрăнатпăр та кĕтесе, урайне, кайса ларатпăр. Ман куçпа тан çӳпçе пек шыçăнса кайнă ура, çăм тутăрпа чĕркенĕскер, выртать. Пуçа çĕклетĕп: юнашар, тенкел çинче, кинемей ларать-мĕн, пĕр урине вăл çĕре пуснă, теприне умри тенкел çине тăсса хунă. Инке манпа сăмах пуçласшăн, анчах та такама хушаматпа чĕнни илтĕнет, пурте шăп пулаççĕ. Паçăрхи пиччe ӳт-пĕвĕпе силленсе пӳлĕм еннелле утать. Алăк хăлăпне вăл ниепле те ярса илеймест, пӳрни сыпписем тимĕре лексе шакăртатаççĕ. Алăка уçса парсан çеç вăл шалалла кĕрсе каять.

— Мĕн пулнă ăна?— ыйтатăп çумри инкерен.

— Эй, ачам... Вăрçă суранĕ...

— Сан уруна тата мĕн пулнă?— тĕпчетĕп эпĕ.

Инке урине сăтăркалать.

— Утă çинче амантăм. Каç пуличчен çултăмăр та, тĕттĕмре çавапа тăрăнтартăм.

— Апла лайăх. Сана ним мар инвалид туса парĕç. Ман аппан ури те, алли те сывă, пуçĕ çеç çаврăнать,— пĕлтеретĕп хуйхă-суйхăма.

Сасартăк темскер кăптăр-каптăр турĕ, шанклатрĕ. Вăраммăн йынăшса яни, хăрăлтатни илтĕнчĕ. Пӳлĕмрен шурă халат тăхăннă хĕр чупса тухрĕ, самантран вăл пĕчĕкçеççĕ кĕленче йăтса каялла кĕрсе кайрĕ.

Кăштахран çӳллĕ пиччене çавăтса тухрĕç. Ун пуçĕ çине те шыв янă, те вăл çав териех тарланă: йĕпе çӳçĕ пайăркан-пайăркан çыпçăнса ларнă, тăнлаври юн тымарĕсем мăкăрăлса тухнă.

Пӳлĕмрен пĕри тухать те тепри кĕрет. Вĕсем пурте тенĕ пекех вăйпитти арçынсем пулмалла, анчах та хăшĕ — алăсăр, тепри — урасăр. Мана анне сăмахĕсем аса килеççĕ, вăл яланах: «Açу урасăр, алăсăр пулин те киле таврăнтăрччĕ»,— тетчĕ. Çак сăмахсене аса илетĕп те, пӳлĕме кĕре-кĕре каякан уксах-чăлах, суккăр çынсем пурте ман атте пек туйăнса каяççĕ...

...Мана такам хулпуççинчен силлет..

— Ан йĕр, ан йĕр, ачам. Пирĕн çине пăхма та хăрушă пуль çав... Ан хăра, эпир те чĕрĕ чунлă çынсемех-çке...

Лăплантараканни — ман çумри кӳршĕ. Вăл пĕчĕк урапа çине чĕн пиçиххипе çыхăнса ларнă. Чĕркуççирен çӳлерех татнă урисене сăран пек якалса пĕтнĕ, тусанлă-пылчăклă шăлаварăн пушă пĕççисемпе çавăрса çыхнă. Пуринчен ытла мана ун аллисем хăратрĕç: кĕске те пуклак ӳт-пӳпе танлаштарсан, вĕсем килĕшӳсĕр вăрăм. Ал лапписем — ура тупанĕсем евĕр — лапкăшĕпе ӳт хытти пулса тăнă, вĕсен калăпĕ те улшăннă: ирĕн-каçăн çийĕнекен хăйра пек лаптакланнă.

Урасăр пиччен сасси ăшă.

— Часах ак киле каятăр. Халь ман кĕмелле, ман хыççăн сире чĕнсе кĕртĕç. Хушаматне çырса илчĕç-и?

Тухтăр патне кĕрес умĕн малтан çырăнмаллине эпĕ пĕрремĕш хут илтетĕп. Пиччe икĕ аллипе урайне тĕртет, урапи малалла кусать. Вăл мана пĕчĕк пӳлĕме ертсе кĕрет, унта лараканпа тем калаçать. Манран эпĕ хăш ялтан, мĕншĕн килнине ыйтса çыраççĕ. Çак хутне эпĕ кĕрес пӳлĕме кайса параççĕ.

Эпир каллех урайне кайса ларатпăр. Сивĕ. Хĕвеланăçнелле тухакан чӳречесем тĕм-хура.

Лисука чĕнни илтĕнсе каять. Пирĕн урасăр пиччe хыççăн кĕмеллеччĕ, эпĕ аптăраса тăратăп. Пиччe кулать, унăн çурăла-çурăла кайнă тăм тĕслĕ пичĕ ачашшăн çуталать. Такам мана çурăмран тĕкет, такам алăка уçса парать — эпир пӳлĕме кĕрсе тăратпăр.

Сĕтел хушшинче — виçĕ тухтăр. Лисук ман çума тĕршĕнет. Эпĕ ăна тухтăрсен умĕнчи пукан çине лартатăп, ан хăратăр тесе, алла ун хулĕ çине хуратăп. Куçлăх тăхăннă хĕрарăм тухтăр пирĕн çине шăтарасла пăхать, ыйту парать. Эпĕ, хыпăнса ӳкнĕскер, хирĕç те хуравлаймастăп. Эпир чĕнменнине кура, вăл тарăхма пуçлать, темĕншĕн ман аннене вăрçать:

— Амăшĕсем килте, ачисене ав пĕччeнех кăларса яраççĕ!

Ун сăмахне арçын тухтăр пӳлчĕ. Вăл сĕтел хушшинчен

тухрĕ те пирĕн ума пычĕ. Малтан аппапа ман ята, анне ăçта ĕçленине ыйтрĕ, кайран сăмаха Лисук çине куçарчĕ.

— Халь çулла-и, хĕлле-и?— ыйтрĕ вăл аппаран.

Лисук ман çине çаврăнса пăхрĕ. Эпĕ сас памарăм. Лисук вара мана алăран ярса тытрĕ те пăшăлтатса илчĕ:

— Сивĕ! Мана сивĕ! Хĕлле!..

Куçлăхлă тухтăр кулам пек турĕ. Манăн йĕрес килсе кайрĕ.

— Кунта килнĕ чух мĕн куртăн?— ыйтрĕ куçлăхлă тухтăр.

— Канихвет куртăм,— шăппăн хуравларĕ Лисук.

Лисукпа урăх калаçмарĕç. Ун куçне тавăрса, куç тĕпне тĕрĕслерĕç, чĕрине итлесе пăхрĕç.

— Чирлĕ мар сан аппу. Пăлахая перет,— касса татрĕ куçлăхлă тухтăр.— Апатне лайăхрах çитерес пулать. Çу, хăйма, çăмарта кирлĕ.

Çапах та пире темле хут çырса пачĕç.

Пу́лĕмрен тухсан, эпĕ çăмăллăн сывласа яратăп, хутне урасăр пиччене тыттаратăп. Çынна сăмахпах çапса хуçма пулать иккен,— пиччe сăмахĕсем çамкаран мăлатукпа çапнă пек танлаттараççĕ:

— Хĕрĕм, ку хутран пулăшу çук. Аппуна виççĕмĕш группа çеç панă. Арçын тухтăрпа тепĕр хут кĕрсе калаçха. Вăл ăнланма тивĕç. Мĕн кирлине ту́ррипе кала. Пĕр-ик сехетрен ĕç вĕçленет, çавăнччен кĕт-ха.

Эпĕ хытса тăратăп. Ĕç çинчен ыйтса пĕлес вырăнне урăхла сăмах персе яратăп:

— Тухтăрсем саланиччен столовăйне кайса килеет-пĕр-ши?

— Килетĕр! Укçу пур-и? Кайса çырткалăр та каялла килĕр.

Эпир хĕвеллĕ ăшă картана тухатпăр. Пу́ртре вăрах ларнăран куç хуралса каять, умра сарă, симĕс ункăсем шуса иртеççĕ.

Столовăйне ту́рех кĕме хăюлăх çитеймест,— алăк умĕнче тăхтаса тăратпăр.

— Эсир столовăйне-и? Кунта пулсан — кĕрĕр. Алăка

çаҫлататăп. Эпир паян ир хупатпăр,— тет картлащка çинче тăракан хĕр. Чăнах, вăл пирĕн хыçранах алăка питĕрсе хурать.

— Хĕрачасем, сире мĕн кирлĕ?

— Çăкăр.

— Паян сутмалăх çăкăр çук.

Эпĕ аптăраса тăмастăп, анне сăмахĕсене пуçра тытса, хĕр манпа килĕшессе пĕлсе, лӳчĕркеннĕ укçана кăларса паратăп.

— Апла пулсан, пире пĕр тирĕк яшка пар. Яшкапа пĕрле çăкăр пар. Эпир иккĕн.

Пире икĕ чĕл çăкăр виçсе параççĕ. Чĕлĕсене асăрханулăн алă тупанĕ çине хуратăп. Çăкăрĕ ăшă. Ман çăвара сĕлеке тулать. Çĕнĕ уйăх пек икĕ чĕлле халь çиес марччĕ. Ман ĕмĕт — юмах пек: киле кайнă чух хирте канма ларăпăр та, пĕр чĕллине çурмаран хуçăпăр, никамран вăтанмасăр вăраххăн чăмлăпăр, ĕмĕпĕр... Тепĕр чĕллине киле илсе çитересчĕ... Килте виçĕ татăк тăвăпăр — каллех çăкăр çимелле пулать!

Пире пĕр чашăк яшка антарса параççĕ. Анне пире пур çимĕçе те пĕр тан уйăрма вĕрентнĕ; халь, çак яшкапа тăранмасса сиссе, эпир черетпе çиме канашлантăмăр. Анчах та Лисук пĕр кашăк яшка ăсса иличчен, ăна çăтса яриччен ĕмĕр иртнĕн туйăнать. Ĕнер эпир унпа кашлич çинĕччĕ, те çавăнпа, те шăннипе Лисук тути чăмăркка пек щыçса тухнă,— пăрăçлă яшкана вĕрсе сивĕтмесĕр сыпаймасть. Чуна çапла йĕкĕлтенине чăтса тăраймасăр, çĕнĕ меслет шыраса тупатăп. Лисук хирĕçлемест. Халь кашниех умлăхыçлă икĕ кашăк сыпать. Эпĕ хам пая кап-кап çăтса яратăп та, Лисук мĕн чул çинине шутласа ларатăп. Вăл икĕ кашăк ăсса илессине кĕтни — хĕртнĕ тимĕре тытса ларнипе танах. Лисук ман асапланăва чухларĕ курăнать, ĕнтĕ вăл яшкине сивĕтсе те тăмасть, васкать, сыпмассерен ăхлата-ăхлата илет.

Тирĕк тĕпĕнчи яшка тата виç-тăватă кашăк пулатчĕ пулĕ, столовăй чӳречи тĕлĕпе арçын-тухтăр иртсе пынине курах кайрăм. «Ăçта каять вăл? Вĕсен ĕçĕ вĕçленчĕ те-и? Килелле утмасть-и? Кайран ăна шыраса тупаймăн».

— Лисук, эс çакăнтах лар. Яшкана мансăр ан çи. Çакăра ан тив,— тесе урамалла вирхĕнетĕп.

Тухтăра хăваласа çитетĕп те хыçалтан туртатăп.

— Пиччe! Тухтăр пиччe!

Алăри хута кăтартатăп.

— Çак хутпа пире хăмăл çултараççĕ-и?

Тухтăр ман сăмахсене ăнланаймасть. Эпĕ тепĕр хут ыйтатăп.

— Çак хутпа хăмăл çултараççĕ-и пире?

— Мĕнле хăмăл? Йĕркипе каласа пар-ха.

Сасартăк тухтăр пичĕ тăрăх çак хутпа пире нимĕн тĕ паманнине ăнкарса илетĕп. Ман умра куççуль тĕтри сиккелет, янкăр тӳпе хĕррипе ярр! та ярр! хĕвел шăвать, ун хĕрлĕ çути тимĕр витнĕ çурт таррипе ман паталла юхса килет. Эпĕ йĕркипе ăнлантараймастăп. Пирĕн тавра çын пухăннă. Урмăшнă сас кăшкăрни илтĕнет. Эпĕ кăшкăратăп иккен.

— Эпир вилетпĕр! Ĕне усрамасан, эпир вилетпĕр!

Ман ăспуçра хĕл каçĕсенче колхоз улăмне вăрлама çӳрени пăтрашать: улăм ури уй варринче, çил çинче ларать, туртатăн-туртатăн пăрланнă улăма, ху сиксе чĕтретĕн — ак-ак сана хуралçă ярса тытать... Имренĕскер, тата хытăрах кăшкăратăп. Тухтăр мана çурăмран лăпкать. Ун сăмахĕсем çăра тĕтре витĕр чĕтренсе килеççĕ.

— Хулара пулсан, сан аппуна пĕрремĕш группа паратчĕç. Халь ун алли-ури сывă, ялти ĕçе хутшăнма пултарать тесе ăна виççĕмĕш группа çеç çырса патăмăр.

Ӳссе çитнĕ çынсем йăнăшмаççĕ тесе! Эпĕ юхăмне пӳлнĕ чула илсе пăрахасшăн кĕрмешекен пĕчĕк шыв пек антăхса каятăп.

— Тухтăр пиччe, ма çапла калан?! Ăна «ухмах Лисук» теççĕ вĕт! Ăнсăр çын ялта епле ĕçлетĕр? Ĕнер ăна анне чĕкĕнтĕр çумлама илсе кайрĕ. Чĕкĕнтĕре çум курăкĕнчен уйăраймасăр вăл пĕтĕмпе туртса кăларнă. Пире бригадир вăрçса пĕтерчĕ! Ĕç кунĕ пама мар, çак сăтăршăн тĕрмене лартмалла сире терĕ...

Сас вăйĕ пĕтрĕ. Эпĕ ĕсĕклесе ятăм. Тухтăр мана хăй çумне пăчăртать.

— Чарăн, пĕчĕкскер, чарăн. Халь каярах юлчĕ, тухтăрсем саланчĕç. Аппуна çитес эрнекун çавăтса кил. Ана тепĕр хут пăхăпăр. Сăмах паратăп сана: кăçал утă çулатăрах. Ку хутне кунтах хăвар. Аннӳне: «Пурте йĕркеллĕ пулчĕ, хучĕ çине пичет çеç пустараймарăм»,— тесе ăнлантар. Халь киле вĕçтерĕр. Каç пулать.

Пит-куçа саппунпа шăлатăп та, иклетнипе сике-сике илекен пуçа ик алăпа тытса, пăрахса хăварнă çăкăра илме чупатăп.

Столовăй алăкне çăрапа питĕрнĕ. Лисук пӳрт çумĕнче ларать.

— Çăкăр ăçта?— кăшкăратăп эпĕ.

Лисук сиксе тăрать те ун-кун пăхкалать. Ун кĕсйи пушшине, аллинче нимĕн те çуккине куç хупса иличчен сăнаса илетĕп.

— Çăкăр ăçта теп?!

Лисук йĕри-тавра темĕскер шырать.

— Пĕ-пĕ-пĕлместĕп...

Эпĕ столовăй чӳречи патне ыткăнатăп. Чӳрече хашакĕнчен çакланса, çӳлелле кармашатăп: шалта пуш сĕтелсем çеç.

Эпĕ — каллех Лисук умĕнче.

— Çăкăра ăçта чикрĕн?!

Лисук сиксе чĕтрет.

— Пĕлместĕп... Столовăйне хупмалла терĕç те, эпĕ сан хыçранах тухрăм. Çăкăрĕ пирĕн мар вĕт... Вăл сĕтел çинчех юлчĕ...

Таврана хура тĕс карса илет. Куç умне Лисук çеç, çăкăра çухатакан çеç, тăрса юлать.

Эпĕ каллех малалла ыткăнатăп. Ман чышкăсем Лисука лачлаттараççĕ. Ура айĕнчи çĕр тайкаланать. Столовăй пӳрчĕ пĕр çухалать, унтан чӳречисене çиçтерсе çывхарать. Чӳрече рамисем ĕречĕпе ларса тухнă йывăç хĕрессем пек ман ума çитсе тăраççĕ. Каялла чакатăп. Алăсем çав-çавах тăпач муклашкисем пек ывтăнаççĕ. Хурланчăк çинçе сасса илтсен çеç, ал-ура лĕнчĕр кайнипе, эпĕ пӳрт кĕтессине авăнса анатăп. Кивĕ пĕренесем — ыраш çăкăрĕ тĕслĕ, пĕрене хушшинчи мăкран ыраш çăкăрĕ шăрши кĕрет. Эпĕ ыта-

ланӑ çĕр пичĕ — çӑкӑр пĕçерме хутнӑ кӑмака тĕпĕ пек — вĕри те асамлӑ. Çӑкӑр тĕслĕ таврара ман аппан пичĕ-куçĕ çеç хĕп-хĕрлĕ.

Эпир çавӑтӑнатпӑр та чупатпӑр. Сулхӑн каç вашӑлтатать. Хĕвел анать. Малти тӳпене ылтӑн çыранлӑ, ылтӑн шывлӑ çырмасем евĕрлĕ пĕлĕтсем пӑраласа тухнӑ.

Аслӑ хиршĕн икĕ хĕрача — çинçе туналлӑ курӑк çеç, хыçран хӑвалакан çилпе эпир хытхура пек тайӑлатпӑр.

Пире хирĕç пĕр çын васкаса килет. Утти — аннен...

Кунĕпе хурланса та ман куç типмен иккен, юлашки тумламсем, ӳте хӑпалантармалла вĕрискерсем, анне саппунĕ çине тумлаççĕ.

— Çӑкӑр илсе çирĕр-и?— ыйтать анне.

Ӳпкере хӑй-хай тӑвать, пыра ларнӑ чӑмӑрккана çӑтса та яраймастӑп, сурса та пӑрахаймастӑп. «Çук, çӑкӑр çисе пулмарĕ», тес вырӑнне урӑхла сӑмах тухать.

— Çирĕмĕр,— тетĕп.

— Ачам, эс мĕншĕн юнланса пĕтнĕ?— ыталать анне Лисука.

Лисук ман çине пӑхса илет те пуçне анне саппунĕпе хупӑрлать. Вӑл ĕсĕклет, мана ун хулпуççийĕсем чĕтрени курӑнса тӑрать. Анне ахлатса ярать, пире икĕ аллипе икĕ енчен ыталаса илет.

Куçсем типеççĕ. Ман чун-чĕре пушхир пек ирĕк. Аннене тухтӑр хушнине каласа паратӑп. Вӑл пĕчĕк ача пек савӑнса каять, кулать, аппапа иксĕмĕре çĕнĕ кĕпе çĕлесе парасшӑн ĕмĕтленет. Хальхинче ку чӑн пулассăн туйӑнать...

Тĕттĕм пулнӑ çĕре эпир киле çитетпĕр. Каçхи апат хыççӑнах эпĕ çывӑрса каятӑп. Мана илемлĕ тĕлĕк курӑнать.

Анне кӑмака хутса янӑ пек. Эпĕ сĕтел хушшинче урок хатĕрлесе ларасӑп пек. Ман кĕнекепе юнашар кӑвас чĕресĕ ларать, паш та паш чуста йӳçет.

— Ах, тур-тур! Чуста йӳçсе тӑкӑнать пуль,— ӑшталанать ман анне, кункӑрапа çӑнӑх илсе кĕрет те чуста çӑрма пикенет.

Çав вӑхӑтра кантӑкран шаккаççĕ. Эпĕ чӳрече пӑрне вĕрсе ирĕлтеретĕп. Пĕчĕк çавра шӑтӑкран хӑрах куçпа урамалла пӑхатӑп. Тулта асар-писер тӑман тустарать, çил

улать. Пирĕн кил умĕнче пĕчĕк çуна сĕтĕрнĕ ушкăн ача тăрать. Вĕсем мана чĕнме килнĕ.

— Еля, кив улăм пуçтарма атя!

Вĕсене эпĕ çапла хуравлатăп:

— Пирĕн лупас тулли утă! Ниçта та каймастăп! Пĕлтĕр те, улăм вăрлама çýренипех, мĕн чул урок сиктертĕм, «иккĕ» илсе тăтăм. Мана пĕр класра тепĕр çула хăварчĕç. Халь ĕнтĕ эпĕ тăрăшса вĕренетĕп те тухтăра тухатăп! Тухтăра тухсан, сире пурсăра та утă çултаратăп!

Ачасем ман сăмаха те илтрĕç, те илтмерĕç, тулашакан çилпе кĕрмешсе, кĕртсем урлă колхоз авăнĕ еннелле çул тытрĕç. Ашса тухмалла мар юр ал-урана тăлласа ачасене турта-турта антарать. Ашшĕсĕр тăрса юлнă ачасем пĕтĕрĕнекен юр юххи ăшĕнче çухалаççĕ.

Пýртре ăшă. Вучахри юман кăварĕ çийĕпе кăвак çулăм явăнать. Анне кăмакана çăкăр хывать. Çăкăрĕ ун çаврака мар, чĕлĕ евĕрлĕ. Анне, çăкăрне хăçан кăлармаллине палăртса, сехет çине пăхса илет.

Эпĕ кулатăп. Ман кулă ăшчике ăшă сĕт пек çемçетет. Ман кулă — хаваслăх, çак хаваслăха чăтаймасăр, куçсем куççулленеççĕ, вара эпĕ, чи телейлĕ хĕрача, лĕпсĕрех кайса, куçсене хупатăп.

Эпĕ çăкăр чĕлли пиçсе тухасса кĕтетĕп...

ÇĂЛТĂРСЕМ КУРĂНМАН КАÇ

Катя кухня кантăкĕ умне тенкел çине хăпарса тăнă та тумла тумланине шутлать. Тумли ăçтан татăлни те, ăçта ýкни те курăнмасть, кýлленчĕке ýксе чалтлатни вара уççăнах илтĕнет.

— Пĕрре!

Катя нумай пулмасть çеç «р» сасса калама вĕренсе çитнĕ, çавăнпа çак сасăллă сăмаха калама уншăн çав тери хаваслă. Хĕрача йăл кулать, каялла, çĕрулми шуратса ларакан кукамăш енне кур-ха, кукамай, эп пĕртте селĕп мар! тенĕн пăхса илет.

Кукамăшĕ те мăнукне кирлĕ пек ăнланать.